Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

143 (9285) № ❋ 2006 ҫулхи декабрӗн (раштав уйӑхӗн) 13-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

❋ Депутатсен пухӑвӗ

## СОЦИАЛЛӐ ЭКОНОМИКА ВӐЙ ИЛЕТ

***Эрне кун тӑваттӑмӗш созыври район депутачӗсем черетлӗ ларӑвне пухӑнчӗҫ. Ҫитес ҫулсенче район аталанӑвӗнче пысӑк пӗлтерӗшлӗ вырӑн йышӑнакан ыйтусене татса пачӗҫ. Тӗллевлӗ икӗ Программа йышӑнасси, район бюджетне ҫирӗплетесси кун йӗркинчи тӗп ыйтусем пулчӗҫ.***

### ТӖЛЛЕВЛӖ ПРОГРАММӐСЕМ

Район депутачӗсен пухӑвӗ палӑртнӑ тӑрӑх, «2007-2010 ҫулсенчи Шупашкар районӗн социаллӑ-экономика аталанӑвӗн Программи» вырӑнти ял тӑрӑхӗсенчи тата экономика аталанӑвӗн приоритетлӑ программисен малашлӑхри социаллӑ задачисене палӑртакан комплекслӑ документ шутланать. Вӑл асӑннӑ ҫулсенче те район умӗнче наци проекчӗсене пурнӑҫа кӗртес, лайӑх ӗҫлекен предприятисемпе организацисен аталанӑвне сыхласа хӑварас, ҫавӑн пекех ҫулсеренех производство калӑпӑшне 5-7 процент, ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илессине 3-5 процент ӳстерес, бюджетӑн тупӑш паракан пайне ҫирӗплетес, халӑха ӗҫпе тивӗҫтерес тата ытти социаллӑ-экономикӑлла задачӑсене татса парас тӗллевсене пурнӑҫлӗ.

Вӑрттӑнлӑх мар, преступноҫ районӑн тата обществӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ сферисене сиен кӳрет. «2007-2009 ҫулсенче районта преступноҫпа кӗрешес комплекслӑ Программӑна» саккуна тата право йӗркине тытса пырассине, халӑхӑн пурнӑҫне тата сывлӑхне, пурлӑхне шанчӑклӑх кӳрессине, криминаллӑ лару-тӑрӑва контрольлессине, терроризмран сыхланассине ҫирӗплетес тӗллевпе хатӗрленӗ.

### ҪИТЕС ҪУЛ ВАЛЛИ – БЮДЖЕТ

Бюджет хутшӑнӑвне йӗркелесе пырас Положенипе килӗшӳллӗн, район депутачӗсем 2005 ҫулхи ноябрӗн 22-мӗшӗнче «2006 ҫулхи район бюджечӗ ҫинчен» калакан йышӑнури статьясене улшӑнусем кӗртрӗҫ. Ҫавӑн пекех икӗ пунктра: фельдшерпа акушер пункчӗнче ӗҫлекен медперсонала, «Васкавлӑ пулӑшӑвӑн» тухтӑрӗсемпе фельдшерӗсене, вӑтам медперсонала хушса тӳлемелли; ҫамрӑк ҫемьесене ҫурт-йӗр туянма субсиди, вӑл шутра малтан тӳлемелли взноса е индивидуаллӑ пурӑнмалли объектӑн строительстви валли укҫа уйӑрмалли суммӑсене уйӑрмӑн кӗртсе хӑварчӗҫ.

### СТРУКТУРӐРА УЛШӐНУСЕМ

Район администрацийӗн структуринче пӗлтӗр кӑна улшӑнусем пулса иртрӗҫ. Вӑл шутра ҫӗнӗ уйрӑм – социаллӑ аталану уйрӑмӗ – йӗркеленӗччӗ. Ҫӗнӗ ҫултан вара депутатсем ку тӗлӗшпе тунӑ йышӑну вӑйне ҫухатать. Социаллӑ аталану уйрӑмӗ, вӑл шутра спортпа культурӑн, вӗрентӳ управленийӗн, ГО тата ЧС штабӗн ӗҫӗсене экономика, пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен управленийӗн пуҫлӑхӗ, район ертӳҫин пӗррӗмӗш ҫумӗ йӗркелесе пырӗ. Район пуҫлӑхӗн тата тепӗр заместитель – ял хуҫалӑх уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ – пулӗ. Район ҫапах та аграри ӗҫӗпе ытларах тимленине кура, АПКпа ҫыхӑннӑ наци проектне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлас тӗллевпе ӑна уйрӑм блока кӗртнӗ. Асӑннӑ улшӑнусене кура штатри ҫынсен хисепӗ ҫавӑн пекех юлать. Структурӑри улшӑнусем ума лартнӑ задачӑсене эффективлӑ пурнӑҫлама май парӗҫ.

А.ИЗМАН.

## ҪӖНӖ ҪУЛА ЛАЙӐХ ИРТТЕРЕСЧӖ

Ҫӗнӗ ҫула кӗресси виҫ эрнерен те катӑлчӗ. Тавралӑха витнӗ шурӑ кавир ҫумӑрпа ирӗлсе кайрӗ пулин те, унта та кунта илемлетнӗ чӑрӑшсем куранма пуҫларӗҫ. Темле ҫанталӑк пулсан та Ҫӗнӗ ҫула кӗтсе илме хатӗрленет халӑх. Культура ҫурчӗсене, шкулсене кӗҫех Хӗл Мучипе Юр Пике ҫитӗҫ.

Уяв уяв та, ҫав вӑхӑтрах пушар хӑрушсӑрлӑхӗ ҫинчен те манмалла мар. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн хушӑвӗпе килӗшӳллӗн пиротехникӑпа электротехника изделийӗсене тытса тӑракан тата суту тӑвакан, уяв мероприятийӗсене халӑх нумай пухӑнакан объектсене пушар хӑрушсӑрлӑхӗ енӗпе пӑхса тӑракан ятарлӑ комисси йӗркеленнӗ. Унӑн председателӗ район пуҫлӑхӗн ҫумӗ – социаллӑ аталану уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ В.Н.Мустаев. Унсӑр пуҫне ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен, предприятисемпе организацисен ертӳҫисен декабрӗн 25-мӗшӗччен хӑйсен территорийӗнче хӑҫан, ӑҫта ҫӗнӗ ҫул уявӗсене иртterнине тата ку енпе мӗнле ӗҫсем пурнӑҫланине районти граждан оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру енӗпе ӗҫлекен штаба пӗлтермелле. Халӑх нумай пухӑнакан объектсенче уявсене иртерме патшалӑх пушар надзорӗн районти уйрӑмӗнчен ирӗк пани кирлӗ.

А.АРДАЛИОНОВА.

## ЙЫШ ХУШӐНАТЬ


Фото ӳкерчӗкӗ авторӑн.

2005 ҫулта Ҫӗньялти врач амбулаторийӗ ҫулталӑк тултариччен 20 ачана учета илнӗ пулсан, кӑҫал вара 29 пӑхса тарать. Амбулатори территорине кӗрекен ялсенче ача ҫуратакансен йышӗ майӗпен ӳссе пырать. Килес ҫул ҫемье хушас текен 7 хӗрарӑм хӑйӗн сывлӑхне тӗрӗслеттерме кунта килсе ҫӳрет. Шупашкарта Ҫӗнӗ Шупашкарта учетра тӑнисем те пур.

**Фото ӳкерчӗкре:** Эльвира Скворцова медсестра пӗчӗк пациент сывлӑхне тӗрӗслет.

С.СЕРЕГИН.

❋ Республикӑра

### ОПЕРА ФЕСТИВАЛӖ ВӖҪЛЕННӖ

10-мӗшӗнче, вырсарни кун, опеӑпа драма театрӗнче М.Д.Михайлов ячӗпе йӗркеленӗ опера фестивалӗн юлашки кунӗ гала-концертпа вӗҫленнӗ. Чӑн-чӑн уяв пулнӑ вӑл Шупашкарсемшӗн, ларма вырӑн ҫитмен. 5 куна пынӑ фестивальте кашни кун опера е музыкӑллӑ драма, 2 гала-концерт пулнӑ. Вӗсенчен пӗри, 8-мӗшӗнче Канашра иртнӗ. Вырсарни кунхи концерта Н.В.Федоров Президент та мӑшӑрӗпе пулнӑ.

Кӑҫалхи фестиваль - 16-мӗш, хальхинче артистсем Санкт-Петербургри Мариинский театртан, Англинчен, Ирландирен килнӗ.

## ҪАМРӐКСЕНЕ ӖҪЕ ВЫРНАҪТАРАССИПЕ

«Ӗҫе вырнаҫас процесс суту-илӳ евӗр туйӑнать паянхи пурнӑҫра. Ӗҫлекен суту тӑвакан пекех хӑйӗн пӗлӗвӗпе ӑсталӑхне туянакана – ӗҫ паракана шырать. Анчах предприятисемпе организацисенче хатӗр специалистсене илме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫамрӑксене пулӑшмалли утӑм тӑвакансем те пур. Ҫакӑ вӗренӳ заведенийӗсен выпускникӗсемпе иртterнӗ мини-ярмӑркӑра курӑнать», – пӗлтерчӗҫ халӑха ӗҫпе тивӗҫтерекен центртан. Ҫавна май кунта час-час ҫак мероприятие йӗркелеҫҫӗ те. Юлашкинчен вӑл декабрӗн 6-мӗшӗнче иртрӗ. Унӑн тӗллевӗ – каларӑмӑр ӗнтӗ, ҫамрӑксене частарах ӗҫ вырӑнӗ тупса парасси.

Ярмӑрккӑна 18 выпускник килнӗ. Вӗсем районти шалти ӗҫсен пайӗ ҫумӗнчи ведомство тулашӗнчи хурал, районти тӗп больница, «Абсолют», «Телец», «Маяк Плюс», «Унга» тулли мар яваплӑ обществӑсен представителӗсемпе тӗл пулчӗҫ. Ҫамрӑксенчен нумайӑшӗ вӗсенчен йыхрав хучӗ илчӗҫ. Ярмӑркӑра ҫавӑн пекех центрӑн консультаци пункчӗ ӗҫлерӗ.

А.СУСМЕТ.

❋ Паллашӑр: ҫӗнӗ пуҫлӑх

## *ПРАВО ЙӖРКИ ҪИРӖПЛЕНӖ*

Районӑн шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене октябрӗн 26-мӗшӗнчен пуҫласа милици подполковникӗ **Владимир Алексеевич Михайлов** пурнӑҫлать. Вӑл 1962 ҫулта Канаш районӗнчи Чакаҫ ялӗнче ҫуралнӑ. Янкӑлч шкулӗнче вӑтам пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн Совет Ҫарӗнче хӗсметре пулнӑ. Мускаври право академийӗн Чулхулари филиалӗнче юридици пӗлӗвӗ илнӗ. Канаш хулин шалти ӗҫсен пайӗнче уголовнӑй шырав уйрӑмӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ, ҫакӑнтах следователь, дознани уйрӑмӗн ертӳҫи пулнӑ. 1995-1997 ҫулсенче РФ Шалти ӗҫсен министерствин Управлени академийӗнче пӗлӳ илнӗ. 1998 ҫулта ӑна Канаш районӗн шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартнӑ. 2001 ҫулхи февралӗн 1-мӗшӗнчен вӑл – Комсомольски районӗн шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлӑхӗ.

1998 ҫулта Ҫурҫӗр Кавказра ингуш тата осетин халӑхӗсен хушшинче маларах пулса иртнӗ хирӗҫӳсене пула тухнӑ йывӑр лару-тӑрӑва пӗтерме хутшӑннӑ, ҫакӑншӑн патшалӑх наградине тивӗҫнӗ.

2004, 2005 тата 2006 ҫулсенче Чечен Республикинче право йӗркине ҫирӗплетес тӗллевпе Шалти ӗҫсен министерствин (ШӖМ) хушӑвӗсене пурнӑҫланӑ.


Фото ӳкерчӗкӗ авторӑн.

*В.А.Михайлов.*

Шалти органсен умӗнчи тивӗҫе ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑшӑн ӑна ШӖМ наградисене панӑ.

Авланнӑ, икӗ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ.

Ҫӗнӗ пуҫлӑх редакцие ҫапла пӗлтерчӗ: «Районти милици ӗҫченӗсем обществӑри йӗркелӗхе малашне те ҫирӗплетсе пырӗҫ, уголовнӑй кодекса пӑхӑнман граждансене преступлени тунӑшӑн явап тыттарма суд умне тӑратӗҫ. Ҫакӑнпа пӗрлех ШӖП район халӑхне социаллӑ пурнӑҫри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пыма та пулӑшса пырӗ. Кашни ял поселенийӗнчех участокри инспектор пункчӗ пулмалла. Вӗсене пур ҫӗрте те усассишӗн тӑрӑшӑпӑр. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе пӗрле ӗҫлесси пирки калаҫса татӑлӑпӑр. Пӗтӗмлетсе каласан, районта криминогенлӑ лару-тӑрӑва пур енчен те хамӑр алӑра тытса тӑма тӗллев лартрӑмӑр».

Ю.МИХАЙЛОВ.

## *УСӐЛЛӐ КАЛАҪУ*

Декабрӗн 4-мӗшӗнче Апашри вӑтам шкулӑн акт залӗ ачасемпе тата аслисемпе тулчӗ. Кунта ҫул ҫитмен ачасемпе ӗҫлекен инспекци пуҫлӑхӗ П.Н.Шмуллина калаҫу иртterчӗ. Милици майорӗ районти лару-тӑрупа паллаштарчӗ. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан ҫул ҫитмен ачасем тӑвакан преступленисен шучӗ чылай ӳснӗ иккен. Ҫакӑн сӑлтавӗ: сотовӑй телефонсемпе ҫыхӑннӑ. Вӗсене вӑрлаҫҫӗ, туртса илеҫҫӗ. Сӑмах май, ку телефон ҫыхӑну хатӗрӗ мар, ачасемшӗн вылямалли япала пулса тӑчӗ. Профилактика тӗлӗшпе районта мӗнле ӗҫсем тунипе паллаштарчӗ Полина Николаевна. Вӗренекенсене, ашшӗ-амӑшӗсене асӑрхаттарса ҫакна палӑртрӗ: шкул ачин йӗркене ҫирӗп пӑхӑнмалла, пурнӑҫра йӑнӑш ҫул ҫине тӑрасран сыхланмалла.

А.АЛЕКСАНДРОВА, вӗрентекен.

Синоптиксем пӗлтернӗ тӑрӑх

***Юн кун, декабрӗн 13-мӗшӗ***
пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑштах юр ҫӑвать
кӑнтӑрла +1
ҫӗрле -1

***Кӗҫнерни кун, декабрӗн 14-мӗшӗ***
пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑштах юр ҫӑвать
кӑнтӑрла 0
ҫӗрле -2

***Эрне кун, декабрӗн 15-мӗшӗ***
пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑштах юр ҫӑвать
кӑнтӑрла -1
ҫӗрле -2

***Шӑмат кун, декабрӗн 16-мӗшӗ***
пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
юр е ҫумӑр ҫӑвать
кӑнтӑрла 0
ҫӗрле 0

# КАМĂН МЕДАЛĔ ÇУХАЛНĂ-ШИ?

***Ăна Кӳкеçри 1-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсем О.Плотников, В.Агаджанян, А.Смирнов тата А.Федотов Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейĕ умĕнче тупнă. Вара посёлокри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашне пырса панă. Юбилей медальне Аслă Çĕнтерӳ 40 çул тултарнă май кăларнă. Ăна ветерансен канашне пырса илме пултаратăр.***



***Олегпа Валера тата икĕ Саша (фото ӳкерчĕкре) вара питĕ маттур, вăрçă ветеранĕн медальне айккинелле вăркăнтарман, хуçине шыраса пынă.***

Ю.СЕРГЕЕВ.

✵ Райпо

# НАТАША АПАТНЕ ХУРЛАМАÇÇĔ

Çынсене пĕрле пуçтарăнса канмалли, уявсем ирттермелли вырăнсем ялсенче çукрах. Çатра-Хочехматсем ку енчен аптăрамаççĕ. Темиçе çул каялла Кӳкеç райповĕ хăйĕн магазинне юсав ирттерсе икĕ хутлă тунă хыççăн пысăк мар йышпа пухăнма май пур. Закусочнăй усăллă малтанхи кунсенченех унтан халăх татăлмасть. Канмалли кунсенче уйрăмах пуçтарăнаççĕ. Уяв каçĕсем те – кам çуралнă кун, кам юбилей – палăртма пыраççĕ.



*Наталия Павлова пурне те ăшă кăмăлпа кĕтсе илет.*

Çакăнта тимлекен Наталия Павлова сутуçă 2002 çулта повар-кондитер профессине алла илнĕ хыççăн пĕр вăхăт хăйĕн специальноçĕпе ĕçленĕ. Чи юратнă апачĕ – галантин. Тепĕр майлă каласан, тултармăшлă чăх. Çак çимĕçпе Наташа экзамен та тытнă. «Кăткăс ăна хатĕрлеме», – тет вăл. Хăй пĕçернĕ апат-çимĕçе килтисем хурламаççĕ-мĕн. Повар специальноçне суйлама вара Наташăна амăшĕн, Тамара Валерьяновнăн, çулĕ хĕтĕртнĕ.

В.ЭВЕРККИ.

✵ Шăпа

# ИНÇЕТРИ ХӲХЛЕВ

***Ирина Ивановна Беспаловăна хисеплеççĕ районта: клуб учрежденийĕсен методисчĕ, «Юмансар» ушкăн юрăçи, ăста тамада, ар çынсемшĕн – илемлĕ хĕрарăм, культурăна аталантарассишĕн 20 çул ытла вăй хурать… Апла пулин те сăмахăм пачах урăххи çинчен-ха.***

Хисеплĕ вулаканăм, пĕрремĕш хут юратнине астăватăн-и? «Астăватăп», – тетĕн-ха. Унтанпа çурхи шыв нумай юхса иртнĕ пулин те, Ирина Беспалова ниепле те манаймасть авă.

Эх, çунатлă та шухă çамрăклăх! Мĕншĕн эсĕ çавнашкалах чарусăр-ши? Ирина шутламан та, кĕтмен те – Карачура шкулĕнче 6-мĕш класра вĕреннĕ чухне ăна юрату туйăмĕ тыткăна илет. Пĕрремĕш юрату! Тытса чараймăн – шакканă алăкран...



*Ирина Беспалова.*

«Мĕн пулса иртет манпа? – тĕлĕннĕ хĕр. – Пĕрмай пуçра – вăл, тĕлĕкре те – вăл. Пуçран кăларса ярсан та самантрах таврăнать». Шкулта та, уроксем хыççăн та 8-мĕш класра вĕреннĕ каччă патнелле туртăнать. Вăл Çĕрпӳри техникумран куллен тăван яла таврăннине сыхласа тăрса йăпăрйăпăр урама сиксе тухать, пушă витресемпе çăл патне васкană май каччăпа пĕр-ик сăмах та пулин калаçса илет-илетех.

Çĕрле клубран киле таврăннă чухне тантăшĕсем: «Иринăна ăсатса яр ĕнтĕ!» – темен пулсан вĕсем нихçан та алла-аллăн тытăнса утаймастчĕç те пуль. Каччă те арçын ачасем витлессинчен шикленсе, те Ирина хăйĕн патнелле туртăннине сиссе, хĕре килне çитиччен ăсатса ярать.

Ах! Каласа пама пĕлмелле мар савăнăç! Тин кăна Ирина чĕри кăлт! кăлт! тапса пычĕ. Кăкăр тĕлĕнче! Унта кăна та мар, ытти çĕрте те темле ăнланмалла мар япала таçтан çĕкленсе вĕрилентерсе пычĕ.

«Эпĕ ăна юрататăп!» – çапла шухăшласа çывăрсах кайрĕ вăл.

Каçсерен куллен тĕл пулчĕç каччăпа хĕр. Анчах уйрăлмалли вăхăт та çитрĕ: тусне салтака илсе кайрĕç.

Мĕн тери ăшă туйăмлă çырусем çыратчĕ Ирина ун патне. Пĕтĕм чун-чĕререн савнине яла таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтнине пĕлтеретчĕ. Унпа икĕ çул курнăçаймасăр пурăннă хыççăн еплерех тĕл пулнине халĕ те чĕтренмесĕр аса илеймест.

Вĕсене пĕр çемьене пĕрлешме никам та чарма пултарайман пек туйăннă Иринăна, вăл качча тухма хатĕр пулнă. Анчах каччă авланасси пирки сăмах тапратман, Иринăран пăраннă. Часах хĕр сас-хура илтет: «Иринăна килĕштермест йĕкĕт ашшĕ-амăшĕ, ывăлĕ валли урăх хĕр суйлаççĕ». Çакна илтсен Ирина чутах çĕр тĕпне анса каятчĕ, анса каймарĕ, амăшне хĕрхенчĕ, куляннипе чире кайĕ терĕ.

Çапла вĕçленчĕ унăн пĕрремĕш юратăвĕ. Шупашкарти педучилищĕре вĕренсе хуйхине путарчĕ. Йывăр аса илӳсенчен çапларах хăтăлса пычĕ. Пĕр ушкăнра пĕрле вĕреннĕ Тăвай каччипе туслашса кайрĕ. Юнашар вĕренетчĕç, обществăлла ĕçсене пĕрле тăватчĕç.

Вăхăт сиплет теççĕ. Ирина суранне те сипленĕ вăл. Часах унăн чун-чĕринче çулăм – юрату çулăмĕ – иккĕмĕш хут хыпса илнĕ. Анчах Ирина йывăр çын пулнине пĕлсенех пулас ашшĕ айккинелле тапса сикнĕ... Çакна пăхмасăрах Ирина ача çуратнă, хатĕрленсе ал ачипех патшалăх экзаменĕ тытнă. Коридора тухсанах куççулĕсем шапăртатса юхса аннă, пепкине хăйĕн çумне чăмăртанă.

Дипломне те пĕрлех çунă вĕсем. Ара, ăна хӳтĕлеме пепки те хутшăннă-çке. Халĕ Александр 21 çулта ĕнтĕ, ятарлă пĕлӳ илнĕ, Мускавра ĕçлесе пурăнать. Ирина ăна пĕчченех ура çине тăратнă.

Юрату çулăмĕпе икĕ хутчен çунса кайнăран-ши, Ирина каярахпа чылай хушă хăйĕн телейне тупаймасăр асапланнă. 38 çула çитсен тин хăйĕнчен 15 çул кĕçĕнрех каччăпа – Сергейпе – пĕрлешнĕ. Ĕнтĕ 5 çул вĕсем – упăшкипе арăмĕ.

Улатăр каччи Сергей чăваш хĕрне Иринăна хытă юратать, çепĕç сăмахсемсĕр пĕр кун та иртмест вĕсен. Малашне те çаплах пултăр ĕнтĕ.

Ю.ЮМАН.

# ТĂРĂШСАХ НИКĔС ЯРАÇÇĔ

***Иккĕмĕш ачана пăхса çитĕнтермешкĕн килес çултан малашне патшалăх 250-шар пин тенкĕ уйăрма шантарать. Лайăх вĕт, э. Пит нумаях мар пулсан та… Ăна çурт-йĕр тумашкăн е ачана вĕрентмешкĕн яма юрать теççĕ. Çакă районта ача çуратассине ӳстерĕ-ши, çук-ши? Ыйту хуравне шĕкĕлчеме Çатракасси тата Иккасси тăрăхне çитрĕмĕр.***

## ÇĂЛТАН ТУПРĂМĂР

Сарапакассинче çурчĕ-йĕрĕ аван вара, пит тĕпленсе пурăнаççĕ. «Апла çамрăксем ача çуратасшăн пулĕ-ха», – текелесе шухăшласа пыратăп. Ял хĕрринчи пӳрт чӳречинчен шаккатăп. Кантăкĕнчен акă ачапча пичĕ курăнчĕ. «Пепкесем пур-ха!» – вĕлтлетсе илет пуçра. Алăка хĕрĕх çулсенчен иртнĕ хĕрарăм уçать. Паллашатпăр, Галина Федорова, милици пенсионерĕ.

– Ĕнер кăна пульницăна Налеткина Ира çуратма кайнă терĕç, – пĕлтерчĕ вăл. – Йывăр çынсем урăх çук ялта.

– Хăвăр кайăк кĕтместĕр-и?

– Çук-çук, эпĕ ачаран юлнă ĕнтĕ. Кантăкран пăхаканни те ман мар, йăмăкăн. Хăй вăхăтсăр çĕре кĕчĕ те, ачисене хамăр пăхатпăр... Упăшки пулнăскер хирĕлет, пирĕнтен туртса илесшĕн...

## ÇИНÇЕ ПИЛĔК САРĂ ХĔР ПĔЧЧЕН ÇЫВĂРНĂ ЧУХ ПЕПКИ, АЙ, ПУЛĔ-ШИ?

Ача чăкăчĕ тĕлне лекмĕпĕрши тесе Çатракассиневаскарăмăр. Ĕлĕкрех пепке çуралсан кӳршеарша пухса пуçламан чăкăтпа, пуçламан çăкăрпа «ачана ырлăх-сывлăх пар, кунлăçуллă, ăраскаллăтивлетлĕ ту» тесе апатланнă. Пепкесем яла вĕçсе килнине фельдшерпа акушер çуртĕнче тăрăшакансем чи малтан пĕлекенччĕ – унта кĕретĕп.

– Эпир пăхса тăракан Çатракасси, Сарапакасси, Мокшин, Шоркка, Пикшик, Хурăнлăх ялĕсенче 2004 çулта –3, 2005 çулта – 5, 2006 çулта 10 ача çуралнă, – каласа парать Галина Григорьевна Корнилова акушер. – Çулталăк вĕçне ытларах та пулмалла.

Ырă хыпарпа савăнтарчĕç ача-пăча сывлăхĕшĕн тимлекенсем.

## АРÇЫНСЕМ ХАТĔР...

Ял хушшинче иртен-çӳренсемпе пуплетĕп, «килес çул пусра ача ытларах тупмĕç-ши?» – тетĕп. «250 пин тенкĕ параççĕ тенине хам та илтнĕччĕ-ха, – калаçăва хутшăнать сакăр вунна çывхаракан кинемей. – Мĕнши, пире памаççĕ-ши тесе председатель патне эп те кĕрсе пăхрăм-ха... Темле çав, тем, шантармарĕ-ха...»

– Ача çуратма ар çын кирлĕ, – тытса чаратăп Сарапакассинчи çамрăк та вăй питти арçынна. – Ĕлĕк кашни коккăртах ача купиччĕ, вĕлле хурчĕсем пек йăшăлтататтăмăр. Мĕн пулчĕ? Арçынсем шырама пăрахрĕç-и? Е хĕрарăмсен ача кĕлти саланнă-и?

– Пăрахма пăрахман поль, автан яланах авăтать вăл, – хуравлать кил хуçи. – Пирĕн пĕрре пор-ха, арăм тепре çоратасшăн пек калаçмасть, темшĕн... «Патшалăха шанса çоратса лармастăп», – тет.

## НИКĔС ХЫВАÇÇĔ

Иккассинчи фельдшерпа акушер çуртĕнче пире унăн хуçи Ираида Васильевна Султаева кĕтсе илчĕ.

– Пирĕн тăрăха кĕрекен виçĕ ялта 2004 çулта – 4, 2005 çулта – 5, кăçал 8 ача çуралнă, – савăнсах пĕлтерчĕ вăл. – Темрен килет: 2003 çулта 10 вĕçсе килнĕччĕ. Эпир питĕ тăрăшса пăхатпăр ĕнтĕ, сывлăхĕсене куллен тенĕ пек тĕрĕслетпĕр. 25 çул хушшинче пирĕн пĕр ача та вилни пулман...

Чăн та, ача пăхакан выçса вилмен, йытта пăхакан выçса вилнĕ теççĕ. Мĕнле пулсан та ачасем кайран хамăрах кирлĕ.

Анчах мĕн мурĕ ку? Çатракассинче те, Самуккассинче те, Иккассинче те ачапчаран ытларах кĕрт йыттисене асăрхарăм. Шельмăсем улпут пурсуйĕсем пек ирĕккĕн çӳреççĕ.

«Мĕн юлакан ачасем ан ӳкчĕр, сурчăк çеç ӳктĕр», – текелесе пыратăп урампа, лавккара çамрăк хĕрарăмсемпе тĕл пулатăп.

– Патшалăх ун чухлĕ укçа пани аван-ха, – тет пĕри. – Анчах эпĕ çавăншăнах мĕкĕрленсе кута ыраттармастăп çав...

– Эпĕ вара иккĕмĕшне çуратасшăн-ха, – калаçăва хутшăнать тепри.

Вăрттăн-хĕрттĕн ыйтса çакна та пĕлме тӳр килчĕ: асăннă ялсенче çитес çул çемье хутшăнтăр тесе никĕс яракансем кăçал сахал мар пулнă-мĕн, çынран юлас мар текеннисем халь те тăрăшаççĕ тет. Çапла вара 2007 çулта ку ялсене кайăксем кăçалхинчен ытларах вĕçсе килес шанчăк пысăк.

Ю.МИХАЙЛОВ.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*И.В.Султаева фельдшер пепке сывлăхне тĕрĕслет.*

✻ Ылтăн аллăсем

# АЛ ĔÇĔНЧЕ ЧУН КАНĂÇНЕ ТУПАÇÇĔ

## ЫЛТĂН АЛĂЛЛĂ ĂСТАСЕМ ЯЛСЕНЧЕ ПАЯН ТА НУМАЙ

***Ача чухне пӳрт маччи çинче выляма юрататтăм. Мĕн кăна çукчĕ унта? Пир тĕртмелли инструментсем, сăпка, кĕленче савăт лартма пушăтран çыхнă ятарлă хатĕрсем… Çенĕкре вара йывăçран касса тунă япаласемччĕ. Шкапĕ те, тырă упрамалли ларĕ те, арчасем те (аван мар та, анчах пурне çак самантра аса илейместĕп халĕ) пурччĕ. Чылайăшĕ кукамайăн ашшĕ тунисемех пулнă. Тăхăр вунна çитсе çĕре кĕнĕ кукамай вĕсене темле реликви вырăнне хурса хакланăн туйăнатчĕ. Ăна кăна-и, паянччен упранса юлнă çав япаласем хама та ачалăхпа, юратнă кукамайпа тата унăн несĕлĕсемпе çыхăнтарнăн туйăнать. Кукамай тĕртнĕ япаласем халĕ те пур, вĕсемпе кăмăлтан усă куратăп…***

***Ĕлĕкхи ал ăстисем хăйсен пултарулăхне хăйсемпех илсе кайнăн туйăнма пуçларĕ темшĕн мана. Хĕрарăмсем алсиш-нуски, кофта тавраш çыхаççĕ-ха, арçынниисем те пуртă тытса чутлаççĕ. Анчах ĕлĕкхи пек ăстасем юлнă-и-ха пирĕн хушăра? Çакна пĕлес тĕллев лартнăскер, вĕсемпе паллашас шухăш тытнăскер ноябрĕн пĕр вырсарни кунĕнче Ишек пасарне çул тытрăм. Унта тимĕртен ăсталанă куркасем, тĕрлесе те эрешлесе капăрлатнă чăваш тумĕсем маларах сутатчĕç те, халĕ курмарăм ун пеккисене. Çапах хăйсен таварне сĕнекен ăстасем пĕрех тупăнчĕç. Вĕсем – карçынкка-лăпă çыхакан, çунашка авакан маçтăрсем. Малтанхисемпе паллашрăм-ха, анчах карçынкка сутаканни хăйĕн ятне-шывне тем сăлтава пула пĕлтерме тăхтарĕ.***

### КАРÇЫНККА-ЛĂПĂ ПАТНЕ – ИШЕК ПАСАРНЕ

***Вăрманкас-Тăрăнти А.М.Михайловпа Янăшри Л.В.Васильева ку пасара çӳрекенсем паллаcа çитнĕ пуль. Ку ăсталăха илни вĕсен пĕрремĕш çул мар.*** Леонид Васильевичăн виçĕ теçетке çул ĕнтĕ. Александр Михайловичăн «стажĕ» шăп та лăп çурри, анчах вăл та хитре те çирĕп çыхма тахçанах вĕренсе çитнĕ. Ăсталăха вăл хăйсен ялĕнчи Таиç ятлă кинемейрен вĕреннĕ. А.М.Михайлов та, Л.В.Васильев та малтанласа хăйсем валли çыхнă, хитре пулнине кура сутма пуçланă. Леонид Васильевич тĕрлĕ виçепе тăвать. «Телевизор пăхмастăп эпĕ, – тет вăл. – Мунчара манăн радио пур, çавна итле-итле ĕçлетĕп». Ик ăста пĕр-пĕрне конкурент вырăнне йышăнмаççĕ. Хакĕ вĕсен иккĕшĕн те пĕр пек: 150 тенкĕ.



*Алексей Яковлевич карçынккисем тата епле тăпăл-тăпăл.*

«Слава» хуçалăхра водительте тимленĕ А.Я.Лазаревăн (Ишек ял тăрăхĕнчи Хураçырмаран вăл) карçынкка çыхакан пĕр предприятире ĕçпе пулма тивнĕ. Кăсăкланса сăнанă ăстасем тăрăшнине, хăй те çыхса пăхнă. Халĕ тивĕçлĕ канура та, вăхăт пур. Выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕç пуçтарса пĕтерсенех алли хулă патне пырать. Хăва хуллине Ункă шывĕ хĕрринче касать. Кунне виçĕ карçынкка таран çыхать. Ялта та туянаççĕ, теприсем заказ парсах хураççĕ.



*А.М.Михайловпа Л.В.Васильев лăпписене туянас текенсем тупăнсах тăраççĕ.*

Сăмах май, хăван пулса çитес вăхăт вăрттăнлăхĕ те пур иккен, ку вăл – кĕркунне. Тата çулла кайăксем йăва çавăраççĕ те вĕсене шиклентересшĕн мар. Çавăнпа лăпă çыхасси сезонлă ĕç тени тĕрĕс. Хулăна нумай вăхăт выртта-раймастăн – типсе каять. Л.В.Васильев çĕмĕртрен те çыхать, анчах ăна авма йывăртарах-мĕн.

### ХАМĂР ЯЛТА ТА ПУР. ПАЯН ГЕОЛОГ МАР – ĂСТА ПЛАТНИК

***«Ал ăстисене шырама Ишек пасарне кайрăм», – тесен тăван ялăмрисем хамăр урамрах пĕр пысăк ăста пурăннине пĕлтерчĕç. Чунтан тĕлĕнтĕм. Çичĕ ютра мар иккен, 30 киллĕ ялăмрах маттурсем пур.***

Сакăр ачаллă çемьере ӳснĕ Виталий Петров. Ашшĕ – вăрçă ветеранĕ. Вĕсен амăшĕ чире пула ир çĕре кĕчĕ. Ун чух эп çамрăкрах пулнă пулин те ăна, ырă кăмăллăскере, астуса юлнă. Виталий Алексеевичăн тăванĕсенчен çиччĕшĕ те ятарлă вăтам е аслă пĕлӳ илнĕ. Вячеслав (йывăр тăпри çăмăл пултăр) калем енне туртăннă, журналист пулса ĕçленĕ. Вениамин пединститутра физикăпа математика факультетне пĕтернĕ, паян кун та Мăн Мамăш шкулĕнче вĕрентет. Тамара та пĕр суйланă çула улăштарман, вăл çыхăну техникумĕн дипломне илнĕ, Янăшри çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ. Пĕр тăвансенчен Галя – физкультура учителĕ, Эльвира – шкул çулне çитменнисемпе ĕçлекен специалист, Зоя – агроном. Анчах паян вĕсем урăх ĕç тупнă.

Çемьери чи кĕçĕн ывăл – Виталий – пусĕнче геолог пулас ĕмĕт амаланать. Хăйĕн юлташĕпе вăл Мускаври геологипе тĕпчев университетне çул тытать. Лешĕ кĕреймест, Виталий экзаменсене ăнăçлă тытать. Анчах чун юратнă специальноçпа ĕмĕрнеирттерме май килмест ăна. Ĕлĕкрех вĕт çемьене тĕпе юлаканни кĕçĕнни пулнă. Çапла Виталин тăван киле таврăнма тивет.

Платникра чылай çул ĕçленĕ вăл. Чун канăçне унта тупнă тесен те тĕрĕс-тĕр. «Ун пек арçынсем ялта кашни утăмрах пуль», – пултаруллă çынпа кăсăклансан сăпайланчĕ Виталий Алексеевич мăшăрĕ Елена Ивановна. В.А.Петров хăй те мухтанмасть. Çапах Виталий Алексеевич пуртă-кĕреçе аври, кравать ăсталанине, çава туптанине, çунашка авнине, лăпă çыхнине, çăматă йăваланине пĕлтĕм-пĕлтĕмех. Çакна вăл бизнеса куçарман. Хăй çемйи валли тăвать, тăван-пускил ыйтсан – хирĕçлемест.



*«Кунта эрешсен пĕр пайĕ çеç-ха», – тет В.Ф.Васильев.*

### ПĔР УРАМРИ МАТТУРСЕМ

***Шинер Тăрăн ялĕнче пурăнакан А.Т.Тимофеев йĕрке хуралĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Хулара пурăннă чухнех вăл касма-ăсталама маттур пулнă. Яла куçса килсен вара ку ене тӳрремĕнех кӳлĕннĕ. Т***имофеевсен килĕнче Аркадий Тимофевич тунă сĕтел-пуканран пуçласа кравать, кресло, кĕтесе лартмалли диван, шкап таранах пур. Çемье вĕлле хурчĕ те ĕрчетет.



*Кĕтесе лартмалли ку дивана Шинер Тăрăнти А.Т.Тимофеев хăй ăсталанă.*

Çак ялти В.Ф.Васильев йывăç эрешлеме юратать. Унăн ылтăн алли пирки вăл тăрăхри ялсенче пурăнакансем кăна мар, юнашар Красноармейски районĕсем те пĕлеççĕ.

«Пĕринче пирĕн, Илья Ильинпа иксĕмĕрĕн, пĕр пуçлăх патĕнче дача тунă çĕрте платникра тимлеме тиврĕ. Тĕп ĕçсене вĕçленĕ хыççăн хайхи наличник тутарасшăн пулчĕ, – аса илет Виталий Федорович. – Ытти çынсен дача чӳречисене пăхса çаврăнтăмăр. Туса пăхрăмăр та йĕркеллех пулчĕ».

В.Ф.Васильев килĕнче паян çĕршер трафарет выртать. Ӳкерчĕксене хаçат-журнал, кĕнеке тăрăх тупать, хăй шухăшласа кăларать. Виталий Федоровичран пулăшу ыйтакансем хĕлĕн-çăвĕн таталмаççĕ. Материалне заказчиксем хăйсем те параççĕ, хăйĕн йывăçĕнчен те туса парать ал ăсти.

### «АННЕ АРКИНЕ КАССА ТĔРЛЕРĔМ»

***Муркаш районĕнчи Очăкасси ялĕнче çуралнă, халĕ Кĕçĕн Турхан ялĕнчи Тăманакасси урамĕнче пурăнакан (Янăш ял тăрăхĕ) С.Г.Иванова тĕрлеме мĕн ачаран ĕмĕтленнĕ***. Аппăшĕсем алла йĕппе çип тата пир тытнине курсан пушшех тĕрлес килнĕ. Анчах шанса паман ăна пусма. Ешĕлрех тенĕ-ши? Пĕррехинче Светлана харсăрланма шут тытнă. Амăшĕн шур юбкине касса ун çинче тĕрленĕ. Ваклангă аркăна курсан амăшĕ такам усал тума касса кайнă пуль тесе чылай пуç ватнă. Светлана хăй чăрсăрланнине шкул пĕтернĕ хыççăн тин калама хăюлăх çитернĕ – амăшĕ çирĕп пулнă.

Халĕ ветеринар пулса ĕçлекенскер, Светлана Германовна пушă вăхăт тупăнсанах алла йĕппе çип илет. Кăçалхи март уйăхĕнчен вара 54 ал шăлли тĕрленĕ. Çав вăхăтрах ытти япалана та илем кӳме вăхăт тупать. Тутăр, çытар пичĕ... Мĕн кăна тĕрлемест пуль? Тĕрленĕ япала пӳрт тулли, тӳрех куçа тăрăнать. «Пĕринче Янăшран пирĕн яла туйпа 30 туй арăмĕ килчĕ, вĕсенчен вун улттăшĕн пуçĕнче – эп тĕрленĕ тутăр», – каласа парать С.Г.Иванова. Сутмасть, çынсене вара кăмăлтан парать. Çиппине, пусмине туянса тăкакланнине шутламасть, «Мана сăвап пулать», – тет. Юратнă тĕссем те пур ăстан: унăн ĕçĕсенче хĕрлĕ, кĕрен, симĕс ытларах тĕл пулаççĕ.




*Çак япаласене Светлана Германовна тĕрленĕ.*

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

✵ Артиста аса илсе

# ЧĂНАХАХ ТА ИСТОРИЛЛЕ ЎКЕРЧĔК

*Унта кайма васкарăн пулмалла…*
*Пире те ытла ир хăвартăн эсĕ.*
*Апла пулсан та пурнăç малалла,*
*Чăн пурнăç вилĕмрен илемлĕ…*

***Платка ялĕн пултаруллă ывăлне – Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артистне, Çеçпĕл Мишши премийĕн лауреатне Иван Геннадьевич Иванова юлашки çула ăсатнăранпа тăвата çул иртрĕ ĕнтĕ. Ăш пиллĕ, кĕрнек кĕлеткеллĕ, Турă панă хевтеллĕ çывăх çыннăмăр пулнă вăл пирĕншĕн.***

«Историллĕ ўкерчĕк тăвас килет. Атьăр-ха, тăвансем, ялти чи ватă çын патне. Ўкерсе илĕр-ха мана унпа пĕрле», – тенĕ артист çав çулхи çулла. Вăл Феодора Никитична Майорова пулнă. Кинемей 105 çула кайнăран палăрнă. Шутлама та пултарайман эпир ун чухне çав ўкерчĕк вĕсемшĕн те, пирĕншĕн те юлашки пулать тесе. И.Г.Иванов каланă пекех «историлле ўкерчĕк» пулса юлчĕ. Юлашки фотокадр... Иккĕшĕшĕн те. Феодора Никитична декабрĕн 7-мĕшĕнче, Иван Геннадьевич тепĕр кунне ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Пурăннă пулсан декабрĕн 15-мĕшĕнче И.Иванов артист кăçал 60 çулхи юбилейне паллă тăватчĕ. Хаклă çын çук пулин те, унăн ячĕ чĕрех. Тăванĕсен чунчĕринче çеç мар, ял, халăх, театр ĕçченĕсен, юратнă куракансен, паллакансен асĕнче пурăнать ытарайми артист.




*Иван Геннадьевичпа Феодора Никитична асăнмалăх ўкерĕннĕ. 2002 ç.*

Унăн 60 çулхи çуралнă кунĕ тĕлне Иккассинче шкулти вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, культура çурчĕн ĕçченĕсем, вулавăш ертўçи анлă программа хатĕрлеççĕ.

Ыр çын вилсен ыр ят юлать тени тĕрĕсех. «Театрта ăна усал сунакан, ун çинчен япăх калакан пулман. Мĕншĕн тесен вăл хăй никама та усал сунман, çын çинчен нихăçан та япăх каланине илтмен», – тенĕ К.В. Иванов ячĕллĕ чăваш патшалăх академи драма театрĕн илемлĕх ертўçи, СССР халăх артисчĕ В.Н.Яковлев паллă артиста пытарнă чух. Эппин, пуян еткерлĕ Платкаçăна юратнă, юратаççĕ те. Ун пеккисем вара вилĕмсĕр.

М.ТИНЕСПИ,
Платка ялĕ.

## ПОСТАНОВЛЕНИЕ

*главы администрации Чебоксарского района Чувашской Республики*

*11 дек.2006 №752 поселок Кугеси*

***О порядке реализации пиротехнических изделий бытового назначения на территории Чебоксарского района***

**В целях обеспечения безопасности населения и предотвращения несчастных случаев в соответствии со ст.30 закона Чувашской Республики «Об организации местного самоуправления в Чувашской республике», с Правилами пожарной безопасности в Российской Федерации ППБ 01-03, утвержденными Приказом МЧС РФ от 18.06.03 г. № 313 постановляю:**

**1. Запретить торговлю пиротехническими изделиями в предприятиях мелкорозничной торговли: киосках, павильонах, на рынках, в местах свободной торговли и т.п.**

**2. Разрешить реализацию пиротехнических изделий юридическим и физическим лицам в стационарных предприятиях торговли при наличии разрешения администрации района по согласованию с ОГПН Чебоксарского района, отделом внутренних дел района, территориальным отделом территориального управления Роспотребнадзора в г.Новочебоксарске и только лицам, достигшим четырнадцатилетнего возраста.**

**3. Рекомендовать контролирующим органам провести рейдовые проверки на предмет выполнения требований данного постановления, разрешающих продажу пиротехнических изделий бытового назначения в предприятиях торговли.**

**4. Опубликовать данное постановление в районной газете «Тăван Ен».**

**5. Контроль за выполнением данного постановления возложить на начальника штаба по делам ГО и ЧС администрации района.**

**Глава администрации** ***А.П.КНЯЗЕВ.***


***Февральте пĕрремĕш хут пăруламалли хура тына сутатпăр. Мăн Пўкасси ялĕ, 28-мĕш çурт.***

***Куплю землю, земельную долю от 1,5 га. Тел.: 48-83-03.***

***Куплю производственную базу. Тел.: 48-83-03.***


**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1358 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Вурманкасы (земли сельскохозяйственного назначения), сроком на 11 месяцев для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий, строений.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0232 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Чемурша, ул.Магазинная (земли поселений), сроком на 11 месяцев для огородничества.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Собственники** земельных долей Марков В.А. и Самаркина Л.А. сообщают о своем намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 2,03 га пашни в поле №4 рядом с к/с «Утар». Также собственник земельной доли Спиридонов Л.Н. сообщает о своем намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 2,03 га пашни в поле №6 северо-восточнее д.Яуши. Возражения направить письменно в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района ЧР.***

**Собственник** земельной доли Смирнова Е.П. ( земля предоставлена Смирновой Е.П. постановлением главы администрации Чебоксарского района от 19 апреля 2001 г. № 248) сообщает о своем намерении выделиться из земель СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет долей 1,47 га пашни, 0,07 га пастбища в поле №4 второго полевого севооборота с левой стороны от а/дороги, которая ведет на садоводческое товарищество «Три дуба». Кадастровый номер земельного участка 17-16/06-2469. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственники** земельных долей Кузьмин А.Н., Сергеева А.С.сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК имени Свердлова Чебоксарского района ЧР в счет земельных долей 5,05 га, в том числе 4,89 га пашни в поле №3 первого полевого севооборота, участок №1, с левой стороны Шорчекасы-Лагери. Возражения направить письменно в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственник** земельной доли с д.Хыркасы В-Сюктерского поселения Щербакова Л.М. сообщает о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет доли площадью 1,47 га в поле №5 первого полевого севооборота, раб. уч.№3, юго-восточнее дома 17 по ул. Передняя д.Ойкасы. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока договора аренды земельного участка площадью 0,15 га с кадастровым номером 21:21:24 04 01:0030, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Шайгильдино, ул.Совхозная, д.50 (земли поселений), для индивидуального жилищного строительства.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел. (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока договора аренды земельного участка площадью 0,3022 га с кадастровым номером 21:21:16 01 31: 0102, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п.Кугеси, ул.Первомайская между домами №1 и №11 (земли поселений), для строительства многоквартирного жилого дома.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

## ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРЎСЕМ

☎ *2-13-80*


**ОАО ПФ «Чебоксарскагропромтехсервис»** ***примет*** на работу для работы в Сервисном центре с опытом работы:

- **автослесарей** ***(з/плата от 10,0 т.руб.)***
- **автоэлектрика** ***(з/плата от 10,0 т.руб.)***
- **уборщицу производственного помещения** ***(з/плата – 4,5 т.руб.)***

***Телефон для справок: 2-10-18, 2-14-65.***


**ФГУ опытный лесхоз** ***проводит*** **аукцион** по продаже древесины мягколиственных пород в Карачуринском, Икковском лесничествах 28 декабря 2006 года. Место проведения: контора опытного лесхоза. **Начало 10[00] часов.**

**Участник** долевой собственности СХПК «Атăл» Каршев Г.С. сообщает о своем намерении выделить земельный пай пл. 0,735 га пашни в поле № II 3-его полевого севооборота 450 м южнее от здания МОУ А-Кинярской СОШ и пл.0,735 га пашни в поле № III 3-его полевого севооборота, уч.2, северо-западнее от ОМЗ М-Сундырь-1 и М-Сундырь-2. Возражения прошу прислать в течении месяца в адрес ***территориального отдела по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР (п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9).***

**Участник** долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района Казакова Валентина Владимировна 3,76 га сообщает о своем намерении выделить земельный участок в поле № IV первого полевого севооборота, расположенный между а/дорогами ст.Ишлеи-Янгильдино и ст.Ишлеи-с.Ишлеи. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул-Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Участник** долевой собственности землепользования СХПК «Сад» Кондратьев А.Ю., проживающий по адресу: д.Б.Катраси, ул.Московская, д.55 Чебоксарского района сообщает о своем намерении выделить земельный участок в поле №3 около д.М.Янгильдино 10150 кв.м. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Согласно** закона «Об обороте земель с/х назначения» по ст.13 собственники земельных долей сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования колхоза «1-ое Мая» Чебоксарского района ЧР в счет земельных долей по 2,56 га пашни и 0,29 га пастбищ на поле №2 полевого севооборота №2, участок №2 с восточной стороны а/дороги Кугеси-Икково на границе землепользования СХПК-колхоза им.Куйбышева Чебоксарского района Данилов И.Д., Антонов А.В., Семенова В.Н., Осинкина Е.Л., Никифоров П.Н., Петрова М.Б., Петров С.Н., Петров Н.А., Гельметдинов Г.А. Возражения просим прислать по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственники** земельных долей Андрианова С.В., Губкина Е.П., Данилова О.В., Дружинин Н.А., Крылыцова А.А., Мазяров В.К., Малов В.И., Николаева Л.П., Семенова Е.С., Алексеева Л.Ф., Андрианова Л.В., Сорокина Г.Г., Султанова З.Е., Тютина А.В., Власова Л.В., Евдокимов А.Н., Моисеев Г.Ф., Полтавец Ф.В., Мрзукова С.В., Падышев В.Е., Молотова Л.И., Молотова М.В., Молотова Т.В., Щербакова Н.А., Милидонов А.Г., Милидонова Л.В., Милидонова Т.Г., Кухарская Г.А., Александрова Е.А., Вахтеркина Е.П., Карпеев В.К., Дружинин С.К., Чернова Е.В., Ешметьев Л.А., Лавров Э.М., Карпова М.Н., Сметанина З.А., Голенов Н.П. выделяются из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Сад» в счет земельных долей по 2,03 га пашни каждый для создания КФХ в Чандровском саду на основании решений общих собраний собственников земельных долей и межевого дела. Выделяемые участки не превышают среднекадастровую оценку. Претензии принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельной доли Кругляков В.Н. и Круглякова С.Н. сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет трех долей по 1,47 га пашни в поле №2 третьего полевого севооборота, участок №1, юго-восточнее д.М.Сундырь в 600 метрах от ул.Магистральная, д.37. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

✵ ✵ ✵

Администрация Чебоксарского района выражает искреннее соболезнование водителю администрации Чебоксарского района Васильеву Р.В. в связи с тяжелой утратой – безвременной кончиной

**МАТЕРИ.**

«Тăван Ен» хаçат редакцийĕ учрежденин водителĕн Л.В.Павловăн çемйин çывăх тăванĕ

**В.П.ВАСИЛЬЕВА**

вилнĕ пирки вĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.


ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.И.ИЗМАН.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 12.12.2006 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1800. Заказ №
Индекс газеты - 54820.